**Çурт-йĕр тăваканпа Çĕнĕ çул кĕрекинче**

# “Алă усса лармастпăр, малашлăхшăн ĕçлетпĕр”



*Чӳречерен Çĕнĕ çул шакканă вăхăтра пирĕнтен кашниех ырă малашлăха шанса çĕнĕ тĕллевсем палăртать. Çакă Юнкăпуçĕнче вырнаçнă “Хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕ” хупă акционерлă общество ĕçченĕсемшĕн те ют мар. Пĕтĕм халăх 2007 çула кĕтсе илме хатĕрленнĕ вăхăтра асăннă обществăн генеральнăй директорĕпе, “Хура тăпраллă мар зонăри тава тивĕçлĕ строительпе”, икĕ хутчен ЧР Президенчĕн Тав çырăвне илме тивĕç пулнă Виталий Владимирович КОРОТНИКОВПА тĕл пулса калаçрăм, асăннă общество Муркаш Енре строительство ĕçĕпе ĕçлекен сумлă организаци пулнăран унăн ĕçĕпе район пурнăçĕ тачă çыхăннине хамăр калаçăвăн никĕсне хутăм.*

**– Виталий Владимирович, Çĕнĕ çул вăл – иртнине пĕтĕмлетсе малашлăха пăхмалли чикĕ. Ун патне Эсир мĕнле кăтартусемпе тухрăр-ха?**

– Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсене тумасăр татăклăн татса калама хĕнтерех. Апла пулин те пирĕн Сирĕн ыйтăвăр çине хурав хатĕр темелле. Хамăр çулталăк хушшинче пурнăçланă пĕтĕмĕшле калăпăша илсен, кăçал эпир 30 миллион тенкĕ шайне тухрăмăр, хамăр татах та ытларах ĕçлеме пултарнине ăнлантăмăр-ĕнентĕмĕр.

**– Пысăках мар коллективпа та район аталанăвĕшĕн çакăн чухлĕ ĕç пурнăçланине обьектсем çине пайласан, мĕн тухать-ха куç умне?**

– Коллектив тенĕрен, пирĕн акционерлă обществăра паян пурĕ 98 çын ĕçлет. Çӳлерех асăннă ĕç калăпăшне вĕсем пурнăçларĕç те ĕнтĕ. Çавăнпа та май килнĕ чух вĕсене пурне те пурнăçланă ĕçсемшĕн тав туса Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн ăшшăн саламлатăп, çитес çул та хастарлăха çухатмасăр пĕрле ĕçлеме ырлăх-сывлăхпа телей тата ăнăçу сунатăп. Салам сăмахĕсем çине çитнĕрен вĕсене эпир паян Муркаш район администрацине те калатпăр. Вĕсем пире шанса ĕç калăпăшĕпе тивĕçтерни ӳсĕмсен çулĕпе утма пулăшать те. Салам сăмахĕсем – пирĕн ĕç кăтартăвĕсем. Эпир хамăр пурнăçлакан строительство ĕçĕнче районăн сăнне тата Муркаш Енри çынсен социаллă пурнăçне лайăхлатассине мала хуратпăр.

Хамăр пурнăçланă ĕçсене уйрăм обьектсем çине пайласан, çакă курăнать. 2006 çулта эпир Муркашра практикăра пуçласа 4 хутлă пурăнмалли çурт тума пуçларăмăр, тĕп строительство ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Çу кунĕсенче Мăн Сĕнтĕр райповĕн универмагне, Шатракассинчи куллен кирлĕ таварсен магазинне, Уйкас Янасалти врач амбулаторине тĕпрен юсаса хута ятăмăр. Çĕнĕ çул умĕн çеç Москакассинчи куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче тата “Илем” кафере тĕплĕ юсав ĕçĕсене вĕçлесе ял çыннисем валли парне турăмăр. Паян Москакассинче çитес çулхи 2-мĕш кварталта хута ямалли 36 хваттерлĕ çурт çинче ĕçсем пыраççĕ. Кĕркуннене кĕриччен “Рассвет” агрофирмăн Вомпăкассинчи сĕт ферминче пысăк юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Мĕн пурнăçлани пирĕн çулсене уçса çеç пырать. Акă, паян эпир Муркашра 4 хутлă 40 хваттерлĕ тепĕр çурт валли никĕс чавма пуçларăмăр. Каласа хăвармалла, юлашки 4-5 çулта ку 5-мĕш çурт никĕсĕ пулать. Малтанхи 3 çуртĕнче çĕнĕ пӳрт ĕçкисем кĕрлесе иртнĕ пулсан, кăçал пуçланă ĕçсем те кĕçех хваттерсем пулса тăрĕç. Паян пирĕн организацин 5 бригади (кирпĕч хуракансем, штукатур-малярсем, платниксем, электриксем, сантехниксем) районти строительство объекчĕсенче вăй хурать. Кашниех район аталанăвĕшĕн, унăн пуласлăхĕшĕн.

**– Çĕнĕ çул çĕнĕлĕхсем ыйтать те, хваттерсем тăвас ĕçре ун пекки пур-и?**

– Пурнăç уттипе тан пырас тесен, çĕнĕлĕхсенчен тăрса юлма юрамасть. Эпир çапла тăватпăр та. Акă, çитес çултан пирĕн çынсене хатĕр хваттерсем çеç памалла йĕрке пурнăçа кĕрет. Ку таранччен хваттерсем туна çĕрте эпир пулас хваттерсен хуçисем пая кĕнипе, ипотека кредичĕпе, пурăнмалли социаллă çурт-йĕр тата çамрăк çемье программăсемпе усă курнă пулсан, малашне пирĕн хамăр вăйсем çине çеç шанмалли юлать. Çак çул çине эпир тăтăмăр та ĕнтĕ: Москакассинчи 36 хваттерлĕ çуртра строительство ĕçĕсене чарса лармалли тас мар тесе нумаях пулмасть 5 миллион тенкĕ кредит илтĕмĕр. Ĕçсем халĕ кунта малалла пыраççĕ. Кунти 1900 тăваткал метрлăх пурăнмалли çурт-йĕр – çитес çул хута каймалли объект. 2007 çулта пирĕн çавăн пекех Муркашра 1843 тăваткал метрлăх пурăнмалли лаптăк ĕçе кĕртмелле. Çаксем хыçĕнче РФ Президенчĕ палăртнă наци проекчĕпе ЧР Президенчĕн пурăнмалли çурт-йĕр программи тăраççĕ. Район администрацийĕпе килĕштерсе ĕçлени, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.Иванов пирĕн ĕçпе кăсăкланса тăни, хамăр строительсем вара ума лартнă тĕллевсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшни çак ĕçсене вăхăтра тума май паракан никĕс пулса тăраççĕ. Пĕрлĕхре вăй, теççĕ те, пирĕн вăл пур. Апла пулсан ĕçлемелле те ĕçлемелле.

**– Эсир хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацине рынок хутшăнăвĕсем вăй илсе пынă вăхăтра тытрăр. Çĕнĕ пурнăç тытăмĕнче Эсир çухалса кайманни, Муркаш Енре строительство чарăнса ларманни савăнтарать...**

– Сирĕн ыйтăва ăнланнăран ăна вĕçлеме памасăрах хуравне пуçлатăп. Предприятие эпĕ 1999 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче ертсе пыма пуçларăм. Хам та, пĕрле ĕçлекенсем те кашни кун умри ĕçе пурнăçлассине мала хунăран вăл вăхăтра ĕç укçипе 3 çулшăн пулнă тата ытти предприятисене тӳлемелли 2,5 миллион тенкĕ парăма татса лакăмран тухрăмăр, 38 çынна юлнă ĕç коллективне 3 хут майлă ӳстертĕмĕр. Мĕнех, паян эпир шанчăклăн малалла пăхатпăр. Юлашки çулсенче эпир хамăр патăмăрта Н. Царев ертсе пыракан йывăç материалсем хатĕрлекен цех уçрăмăр. Ку та пирĕн ĕç пахалăхĕ çине витĕм кӳрет. Акă, Муркашри 40 хваттерлĕ çуртăн чӳречисене пĕтĕмпех унта хатĕрленĕ еврорамăсемпе лартрăмăр. Çĕнĕлĕх çĕнĕ çурта илем кӳни куç умĕнчех. Ĕçлемелли, пурнăçламалли ĕмĕтсем, çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртмелли шухăшсем татах нумай. Вĕсем йăлтах Муркаш район аталанăвĕшĕн пулнине шута илсе куллен ĕçе тухатпăр. Ĕçлекенсем вара пирĕн патăмăра Муркашран, Отарккăран, Шупашкартан, Элĕкрен, Çармăç Республикинчен çӳреççĕ. Тивĕçлĕ ĕçпе кашнийĕнех чыс-хисеп пур. Петр Аргандеев автокрановщик, Александр Викторовичпа Александр Николаевич Суворов водительсем, Венера Золототрубовапа Маргарита Романова штукатур-малярсем, Геннадий Петров каменщик, Алексей Игнатьев мастер ĕçре ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Хамăр патăмăрта ĕçлекенсене те, пирĕн ĕçпе усă куракансене те, ĕçĕмĕрсене çул уçса паракансене те тепĕр хут Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп, малашне те пĕрлех пуласса шанатăп. Çапла çеç эпир кăçал хамăр палăртакан 60 миллион тенкĕлĕх ĕç калăпăшĕ çине тухăпăр.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

**“Çамрăк çемье” программа тавра**

## Çĕн хваттер – çĕнĕ пуласлăх



Кашни çыннăн пурнăçри тĕп тĕллевĕ – хваттер е пурăнмалли уйрăм çурт. Вăл пулсан ĕç те малалла каять, пурнăç та аталанать, ачасем те çуралаççĕ, шанчăклă та пĕлĕтсĕр малашлăх куç умне тухать.

Чăваш Республикин Президенчĕн “Çамрăк граждансене патшалăх енчен пулăшассине вăйлатасси çинчен” Указĕпе çамрăк çемье пурăнмалли çурт тума е туянма патшалăх пулăшăвĕпе усă курайрать. Çапла вара “Çамрăк çемье” программăпа килĕшӳллĕн кăçал республика бюджетĕнчен районти 25 çамрăк çемьене 11148,94 пин тенкĕ çăмăллатнă кредит панă. Çак çемьесенчен пĕри вăл – Муркашри эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Казаковсен çемйи. Надежда Владимировнапа Лев Владимирович иккĕшĕ те 1977 çулта çуралнă, 1999 çулта И.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне пĕтернĕ хыççăн çемье çавăрнă. Асăннă вĕрентӳ заведенийĕнче биологипе хими факультетне хĕрлĕ дипломпа вĕçленĕ Надежда Владимировна Муркашри лицейре вĕрентет, физвоспитани факультетĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă Лева вара паян Москакассинче вырнаçнă “Сеспель” хупă акционерлă обществăра, малтанхи виçĕ çулта слесарь пулса вăй хунăскер, халĕ бригадир пулса ĕçлет. “Çамрăк çемье” программăпа 2006 çулта вĕсем хваттерлĕ пулчĕç.

– Хамăр çемьепе атте килĕнче пурăнса çитет ĕнтĕ, хамăр валли тĕпел тупас пулать. ЧР Президенчĕн Указĕпе вăй илнĕ “Çамрăк çемье” программа кунта пире пысăк тĕкĕ пулчĕ. Процентсăр кредита тавăрса парасси те çăмăлах мар пулсан та, пуç çинче хамăр ята çивитти пурри кăмăллăрах, – терĕ Лев Владимирович çулталăкри Юльăна чĕркуççи çине вырнаçтарнă май. Мăшăрĕн сăмахĕпе килĕшнĕ Надежда Владимировна ăшшăн йăл кулчĕ те алла кĕнеке тытнă аслă хĕрне Катьăна хăй çумне пăчăртарĕ.

Республика бюджетĕнчен пурăнмалли условисене лайăхлатма пăхнă каялла тавăрса памалла мар субсидисене 2006 çулта районти 22 çамрăк çемье 1486,846 пин тенкĕ илнĕ.

“Ялсен 2010 çулчченхи социаллă аталанăвĕ” тĕллевлĕ программăпа ялсенче пурăнакан 8 çын тата районти 15 çамрăк çемьепе çамрăк специалист субсидиллĕ пулнă. Ялта çурт-йĕр çавăрма патшалăх пулăшăвĕн свидетельствине 14 çамрăк çемье пĕтĕмпе 1914,66 пин тенкĕ тата яллă вырăнти тепĕр 8 ĕçчен 901 пин тенкĕ илнĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

**Пирĕн паллă ентешсем**

## Сумлă çынна чысласа



Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш – чăвашсен пĕрремĕш писателĕ, статистикĕ, историкĕ, этнографĕ. Çавăн пек паллă, сумлă çынна чыслама, çуралнăранпа 185 çул çитнине паллă тума йыхравларĕ хăнасене Юнкă ял тăрăхĕ раштавăн 23-мĕшĕнче.

Уяв кунĕ Юнкăпуç ялĕнче пуçланчĕ. Кунта С.М. Михайлова халалласа лартнă палăк уçăлчĕ, митинг пулчĕ. Митинга ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков уçрĕ, район администрацийĕн пуçлăхне Ю.А. Иванова сăмах пачĕ. Вăл С.М. Михайловăн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ.

Ял халăхĕ чылай пуханнă. Аякри хисеплĕ хăнасем те йышлă. Вĕсен йышĕнче: ЧР культура, наци ыйтăвĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕн çумĕ М.Н. Краснов, Санкт-Петербургри инженерипе экономика патшалăх университечĕн Шупашкарти филиал ертӳçи А.С. Никитин, И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнчи истори наукисен докторĕ В.Д. Димитриев, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи педагогика наукисен кандидачĕ, доценчĕ Д.Е. Егоров, Чăваш Патшалăх гуманитари наукисен институчĕн уйрăмĕн ертӳçи, чăваш таврапĕлӳçисен ертӳçи В.П. Никитин (Станьял), А.Г. Николаев ячĕпе хисепленекен Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул вĕрентекенĕ Е.Е. Ерагин. Çавăн пекех Çармăс Республикинчи ăсчахсемпе таврапĕлӳçĕсем тата студентсем килсе çитрĕç. С.М. Михайлов ĕçĕсем пирки аса илчĕç, палăк умне чечексем хучĕç. Тăванĕсем те палăк умне тухса ăшă сăмахсем каларĕç. Вĕсем те чылайăн пуханнă.

С.М. Михайлов çуралса ӳснĕ вырăнта йывăç çурт ларать, умĕнче лаштра хырсем ешереççĕ. Инçех мар пăрпа хупланнă кӳлĕ выртать. Çавăн пек илемлĕ вырăнта хӳтлĕх тупнă чаплă ăсчаха халалласа лартнă палăк. Çитес вăхăтра кунта курав, кану кĕтесĕ тăвас шухăша пĕлтерчĕç митинга килнĕ пысăк шайри ĕçченсем.

Юнашарах унăн тăванĕн ачисем, йăха малалла тăсакансем, кил-çурт çавăрнă. Несĕлсен йăли-йĕркине, тăван кĕтес ăшшине сыхлакан А.М. Яндушкин хăйĕн çемйипе сахал мар тӳпе хывнă çак палăка лартас ĕçре. Ку палăкăн пĕлтерĕшĕ район, республика шайĕнче çеç мар, унăн тулашĕнче те пысăк вырăн йышăнать.

Ун хыççăн Юнкăри вăтам шкулта С.М. Михайлов музейĕ уçăлчĕ. Кунти экспонатсем Янтуш кун-çулне, ĕçхĕлне аван çутатаççĕ. Истори учителĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Е.П. Каптурина вĕсемпе питĕ тĕплĕн паллаштарчĕ. Музейре çавăн пекех Санкт-Петербургри инженерипе экономика патшалăх университечĕн Шупашкарти филиалĕн ертӳçи А.С. Никитин парнеленĕ икĕ ӳкерчĕк илем кӳреççĕ. Халь музей пĕр пӳлĕмрен тăрать. Çитес çул вара ăна анлăлатма палăртрĕç. Çавăн пекех çитес вăхăтра А.С. Никитин музей валли компьютер парнелеме тата экспонат пухакансене кăштах укçан хавхалантарма шантарчĕ. Çитес вĕренӳ çулĕнче вара çак шкулти чи пултарулла вĕренекен Санкт-Петербургри инженерипе экономика патшалăх университечĕн Шупашкарти филиалĕнче тӳлевсĕр майпа вĕренме пултарасса палăртрĕ.

Малалла вара ăслăлăхпа ĕçлĕх конференцийĕ пуçланчĕ. Ăслăлăх ĕçченĕсем, аслă вĕрентӳ учрежденийĕсенчи студентсем, шкулсенче вĕренекенсем тĕпчев ĕçĕсемпе паллаштарчĕç, тухса калаçрĕç.

Ăслăлăхпа ĕçлĕх конференцине шкулта вĕренекенсем те тăрăшуллă хутшăнчĕç. Вĕсем тишкерӳ ĕçĕсем çырса хатĕрленĕ. Районти шкулсенче вĕренекен 9 ачана А.С. Никитин дипломсем тата парнесем парса хавхалантарчĕ.

Е.Е. Ерагин, чăваш наци конгресĕн членĕ пулнă май, музее тин çеç кун çути курнă “Юнкăпуç” тата ытти кĕнекесем парнелерĕ. Çавăн пекех А.М. Яндушкина, В.В. Коротникова, В.М. Илугина, А.Л. Сытина Тав хучĕсем парса чысларĕ.

Конференцие хутшăнакансене Юнкă шкулĕнче вĕренекенсем хаваслă юрăташă парнелерĕç. Çавăн пекех “Чăваш наци тĕрри” (М.В. Филиппова), “Çемçе тетте” (М.Н. Пушкарева), “Ăстаçă” (В.С. Карпова), “Йывăçа эрешлетесси” (Н.Т. Антонов), “Йывăç çинче касса илемлетесси” (Г.В. Смирнов) кружоксенче ăсталанă япаласем илем кӳчĕç.

С.М. Михайловăн пиллĕкмĕш сыпăкри тăванĕ Валентина Федоровна Питернова (Яндушкина) истори архивĕнче ĕçлет. Акă мĕн каласа пачĕ вăл.

– 17-мĕш ĕмĕрте Юнкăпуç тăрăхĕнче Тевел йăхĕ пурăннă. Сыпăкран сыпăка аталанса, йышланса пынă. Спиридон вăл пирĕн ватă асаттен шăллĕ пулнă. Çемье çавăрнă, анчах та вĕсен ача пулман. Çавăнпа та пĕр хĕр ача усрава илнĕ пулнă. Ун пирки вара эпир нимĕн те шыраса тупаймарăмăр.

Эпĕ тĕлĕнетĕп ун пултарулăхĕнчен. Вăл пĕр класс вĕренмесĕрех çавăн пек пысăк шая çитме пултарнă. Ун Турă пани ытла вĕçĕхĕррисĕр пулнă, хăйне аталантарма пултарнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Юнкă шкулĕ хапăл туса кĕтсе илет хăнасене.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**